Муркашра Тыр-пул уявĕ иртрĕ

# Ĕç кăтартăвĕсем кашнинех савăнтараççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Паянхи уява ял хуçалăх предприятийĕсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Хĕл тапхăрне общественна выльăх-чĕрлĕх валли районĕпе 7110 тонна утă хатĕрленĕ. Унсăр пуçне фермер хуçалăхĕсем – 755 тонна. Хатĕрленĕ утăн 47 проценчĕ – 3368 тонна – 1 класлă, 36 проценчĕ - 2530 тонна – 2 класлă, 17 проценчĕ – 1209 тонна – 3 класлă. Пĕрремĕш класлă утă Чкалов яч. хис. хуçалăхра 100 процент, Суворов яч. хис. хуçалăхра 86 процент, «Ударник», Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсенче 70 процента яхăн хатĕрленĕ. Районĕпе 17231 тонна силос, 4192 тонна сенаж янтăланă. «Передовикпа» «Свобода» хуçалăхсен специалисчĕсемпе механизаторĕсем 100 проценчĕпех 1 класлă силос хатĕрлеме пултарчĕç. Кăçалхи çул силоспа сенаж хатĕрленĕ чух «Герой», «Оринино», «Передовик», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем консервантсемпе, «Свобода», «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем закваскăпа ăнăçлă усă курчĕç.



Çĕнĕ тырăран пĕçернĕ кукăле район пуçлăхĕ Ю. Иванов касать.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне кăçалхи тăхăр уйăхра 36 центнер аш-какай, 227 центнер сĕт туса илтĕмĕр, кашни ĕнерен вăтамран 3182 килограмм сĕт сурăмăр. Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем республика шайĕнче те пултарулăхпа палăрса тăраççĕ. Сăмахран, «Герой» хуçалăхра кашни ĕне çулталăк пуçланнăранпа вăтамран 4038 килограмм, Суворов яч. хис. хуçалăхра 4026 килограмм сĕт антарнă, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Владислав Кириллович.

Район çыннисене Тыр-пул уявĕпе Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ С. Павлов, Шупашкарти Муркаш ентешлĕхĕ ячĕпе Раççей Геройĕ Е. Борисов, кӳршĕллĕ районсен представителĕсем, пирĕн районпа тата хуçалăхсемпе тачă çыхăну тытакан предприятисемпе организацисен ертӳçисем саламланипе пĕрлех ĕçре палăрнисене чысласси те çӳллĕ шайра иртрĕ.

Вырмара палăрнă комбайнерсем, ĕçре ырă тĕслĕх пулса тăнă водительсем, уй-хир ĕçĕнчен пăрăнман механизаторсем, мал туртăмлă бригадирсемпе уй-хир ĕçченĕсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине хăпарса тивĕçлĕ парнесемпе пĕрлех район, республика, Раççей шайĕнчи Хисеп грамотисене алла илсе уява килнисене ăшă кулăпа савăнтарчĕç. Çак анлă уявра тăлăх ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелли программăпа килĕшӳллĕн икĕ çамрăк хваттер уççиллĕ пулни, тепĕр çемье яллă вырăнта пурăнмалли çурт-йĕр тума социаллă тӳлев свидетельстви илни вĕсен хуçисене кăна мар, уява пухăннисене те патшалăх пулăшăвĕ пуш сăмах мар иккенне ĕнентерчĕ.

Уява килнисем районта ирттернĕ пурăнмалли вырăнсене йывăççем лартса симĕслентерес тата илемлетес конкурсра камсем çĕнтерӳçĕ пулнине те районта пуринчен малтан пĕлчĕç. Вĕсене шăпах çак уявра пĕтĕм халăх умĕнче чыс турĕç.



Муркашри вăтам шкулти А. Алексеевапа А. Егорова тутлă апат-çимĕçпе.

Торжествăлла пай хыççăн сцена çинче художество пултарулăх коллективĕсем Тыр-пул уявне килнисене мĕн уяв вĕçленичченех хăйсен илемлĕ юрри-ташшипе савăнтарчĕç. Пĕтĕмпе 8 коллектив пулчĕ кунта: эстрада юррисен «Расна» халăх ансамблĕ, «Муркаш» фольклор халăх ансамблĕ, «Екрем» фольклор халăх ансамблĕ, Кашмашри тата Чуманкассинчи Культура çурчĕсем çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕсем, Муркашри ачасен искусство шкулĕнче тата унăн Москакассинчи филиалĕнче вĕренекенсем, «Путене» ача сачĕн коллективĕ.

### ПРОДУКЦИ КУРАВĔ

Ял хуçалăх продукчĕсен курав-ярмăрккине предприятисенче, шкулсенче, килти хушма хуçалăхсенче кăçал туса илнĕ продукцисенчен йĕркеленĕ. Кашни ял тăрăхĕн хăйĕн вырăнĕ. Акă Турай ял тăрăхĕн палаткинче пахча çимĕç ӳпли умĕнче пан улми тата çĕр улмирен ăсталанă акăшсем çутă кӳлĕре ишнине, вĕсем çине улăмран çыхса тунă юлан ут пăхнине, юнашарах асанне чуста çăрса ларнине куратăн та – Турайсем пахча çимĕç урлă хамăр таврари пĕтĕм пурнăçа куç умне кăларнине асăрхатăн. Маттур. Вĕсенчен инçех мар вырнаçнă Йӳçкассисем те пахча çимĕçрен пуян кĕркуннен гербне ăсталанă. Шетмĕпуçсемпе Уйкас Янасалсем вара кукăль пĕçерессипе хăйсем маттур иккенне куравра çирĕплетрĕç.

– Çĕнĕ çăкăртан пĕçернĕ кукăль техĕмне çитекенĕ çук вара, – терĕ çавра кукăльпе ăмсантарса Шетмĕпуç ял тăрăхĕн специалисчĕ Елена Александровна Александрова. Хирĕçлеме сăмах çук.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи пуян опытлă утарçă В. Хлебников уява илсе тухнă пылпа пыл сăри çанă тавăрса ĕçлесен вĕлле хурчĕн тăрăшулăхне те сĕтел çине лартма пултарнине çирĕплетет.

Ял хуçалăх продукчĕсемпе сутă тăвакан ретре вара халăх явăнать кăна. Ăнланмалла, çак уяври йӳнĕрех хаксемпе хĕл валли продукци туянса юлни никамшăн та ытлашши мар.



Оринин ял тăрăхĕнчи Пиккикассинче пурăнакан Ефалия Казакова нумай çул ӳсекен чечексем сутнă çĕрте.

Зоя Валерьяновна Степанова уява килти хушма хуçалăхран илсе тухнă сысна какайĕ хуçасăр нумай выртмарĕ.

– Тулăх тăрантарнипе ашĕ те паха. Çакна сисрĕç пулас уява килнисем – самантрах туянса пĕтерчĕç, – тет суту-илӳ ăнăçлă пулнишĕн савăнăçне пытармасăр кил хуçи хĕрарăмĕ.

– Кун пек çĕр улмие курса-и? – ыйтать юлташĕнчен пĕр хĕрарăм.

– Çук. Ун пекки пулма пултараймасть, – ал сулать лешĕ малалла талпăнса.



«ДаАн» хуçалăх директорĕпе А. Степановпа уй-хир ĕçченĕ В. Иванова хăйсем туса илнĕ çĕр улмипе.

– Пасар пĕрле те телей уйрăм теççĕ. Эсĕ кай, эпĕ хам валли çитес çул лартма тесе пĕр-ик килограмм та пулин туянам-ха, – тесе малтанхи хĕрарăм витрина патнелле утрĕ. Çĕр улми тултарнă михĕне пăхрăм та эпĕ те тĕлĕнсе кайрăм. Икĕ чышка пысăкăш çĕр улмисем унта. Сутуçăпа калаçса кайрăмăр. Ку продукцие «ДаАн» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра туса илнĕ-мĕн: хамăр районтах, пĕр пĕлĕт айĕнчех.

– Пирĕн тăрăхра пысăк тухăç пама пултаракан перспективлă сортсемпе ĕçлетпĕр. Технологие пăхăнсан продукци пулатех, – кăмăллăн калаçать «ДаАн» директорĕ А. Степанов хăйсем патĕнче ĕçлекен В. Иванова ĕçченпе хăйсем илсе тухнă продукцие кăтартнă май.

Кам çĕр улмипе, кам пахча çимĕçпе хăй ăсталăхне кăтартать уява пынисене. Акă Çесмер ялĕнче пурăнакан Александр Никитин 8-мĕш çул ĕнтĕ килти хушма хуçалăхра купăста çитĕнтерессипе тăрăшать. Çак ĕçри нумай вăрттăнлăхсене алла илнĕ ĕнтĕ вăл. Килти хушма хуçалăхри пĕр гектар çинчи купăста кашни çулах хăйĕн вырăнне тупать.

– Пĕчĕк купăста çумĕнче ан ӳкер мана. Шултра купăстисем те чылай, – сăпайлă йăл кулса калаçать Саша купăста тултарнă черетлĕ сеткăна тавар туянакана тыттарнă май.

Ильинка ял тăрăхĕнчи Куçкăн ялĕнче пурăнакан Галина Семеновнапа Иван Ильич Кабуркинсене районта пĕлмен çын çук та пулĕ. Вĕсем чăнчăн пан улми ăстисем. Çавăнпа вĕсен çимĕçĕ кирек хăш пасарта та нумай выртмасть. Çакна Тыр-пул уявĕнчи суту-илӳ ярмăрқки те çирĕплетрĕ.

– Килти хушма хуçалăхри 40 сотка çинче 26 сортлă 105 улма йывăççи. Улмуççисемпе ĕçлесси – пирĕн пурнăçăн уйрăлми пĕр пайĕ, – терĕ хăйсем патне хăнана чĕнсе тата хитре пан улми тыттарса тараса умĕнче тăракан Галина Семеновна.

Çак уявран шкул ачисем те пăрăнса юлмарĕç. Район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче шкул ачисен ĕç пĕрлешĕвĕсен слечĕ иртрĕ. Вĕрентӳ пайĕн методпӳлĕмĕнче вара ачасен пултарулăх ĕçĕсенчен хатĕрленĕ курав ĕçлерĕ. Кунта та кĕр илемĕ кашни утăмрах. Ачасем те аслисенчен кая мар тутлă çимĕçсем ăсталама пĕлеççĕ иккен.

Уявра тĕрлĕ номинацисемпе конкурссем иртрĕç пулсан та вĕсен тĕллевĕ те пĕтĕмлетĕвĕ те пĕрре: «Ĕç çынна тăрантарать. Тухăç пысăк пулсан, çĕршыв та тĕрекрех, пуянрах пулать».

**А. БЕЛОВ.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ

## 2009 çулхи вырмари экономика ăмăртăвĕнче механизаторсемпе механизациленĕ бригадăсем тата уй-хир бригадисем хушшинчи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетни çинчен




А. Афанасьевпа В. Бархаткин фермерсем уявра та ĕç пиркиех.

Ял хуçалăх предприятийĕсен механизаторĕсем хушшинчи конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе килĕшӳллĕн **çапла йышăнатăп:**

2009 çулхи вырмари экономика ăмăртăвĕнче механизаторсемпе механизациленĕ бригадăсем тата уй-хир бригадисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче çаксем çĕнтернĕ тесе йышăнас:

**1. Комбайн экипажĕсем хушшинче:**

– Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Болеслав Николаевич НИКИТИН экипажĕ «Вектор» комбайнпа 1673 тонна тырă çапса тĕшĕлесе пĕрремĕш вырăн йышăннă. Ăна 1-мĕш степеньлĕ диплом, «Вырма-2009» кампанири комбайнăн чи лайăх экипажĕ» чемпион ленти тата 3000 тенкĕ укçан преми парас;

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Радонеж Виссарионович КУЗНЕЦОВ экипажĕ «Акрос-530» комбайнпа 1617 тонна тырă çапса тĕшĕлесе 2-мĕш вырăн йышăннă. Ăна 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 2500 тенкĕ укçан преми парас;

– «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Валерий Васильевич ЕРДУКОВ экипажĕ «Дон-1500» комбайнпа 1198 тонна тырă çапса тĕшĕлесе 3-мĕш вырăн йышăннă. Ăна 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**2. Водительсем хушшинче 9 уйăх кăтартăвĕсемпе:**

– Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Виталий Петрович ИЛЬИНА 62 пин тонна-километр ĕç тунăшăн 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2009 çулхи чи лайăх водитель» лента тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Иван Алексеевич ЕРШОВА 45 пин тонна-километр ĕç тунăшăн 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1200 тенкĕ укçан преми парас;

– «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕнчи Иван Валерианович СТЕПАНОВА 32 пин тонна-километр ĕç тунăшăн 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**3. Трактористсем хушшинче:**

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Николай Витальевич ИВАШКИНА МТЗ-82 тракторпа 1686 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2009 çулхи чи лайăх тракторист» лента тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Алексей Аверкиевич ВАСИЛЬЕВА МТЗ-82 тракторпа 1275 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1200 тенкĕ укçан преми парас;

– «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи Ростислав Витальевич ИЛЬИНА ДТ-75 тракторпа 1270 условнăй эталон-гектар ĕç тунăшăн 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**4. Уй-хир бригадисем хушшинче:**

– «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн Матьăкри производство участокĕн уй-хир бригадине (бригадирĕ Светлана Петровна Максимова) 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2009 çулхи чи лайăх уй-хир бригади» лента тата 2000 тенкĕ укçан преми парас;

– «Свобода» хуçалăхăн 1-мĕш уй-хир бригадине (бригадирĕ Кронид Германович Яриков) 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– «Оринино» хуçалăхăн уй-хир бригадине (бригадирĕ Алевтина Артемьевна Кочнова) 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**5. Механизациленĕ бригадăсем хушшинче:**

– Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн механизациленĕ бригадине (бригадирĕ Валерий Федорович Добрянский) 1-мĕш степеньлĕ диплом, «2009 çулхи чи лайăх механизациленĕ бригада» лента тата 2000 тенкĕ укçан преми парас;

– «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн механизациленĕ бригадине (бригадирĕ Геннадий Никонович Афанасьев) 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 1500 тенкĕ укçан преми парас;

– «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн механизациленĕ бригадине (тĕп инженерĕ Валерий Анатольевич Леонтьев) 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕ укçан преми парас.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Ю. ИВАНОВ.**